Иванов К.В. Тимӗр тылӑ; Тӑлӑх арӑм: [сӑвӑллӑ юмахсем] / К.В. Иванов // Чӑваш илемлӗ литературин антологийӗ. – Шупашкар, 1935. – С. 47-61.

---

*К. В. Иванов.*

# Тимӗр тылӑ.

Тимӗр тылӑ тесенех,
Сехри хӑпаҫ инкесен.
Мӗншӗн-ши вӑл? Пӗлӗр-ха!
Акӑ мӗншӗн, калам-ха!
Пирӗн чӑваш арӑмӗ
Тимӗр тылла йуратмасҫ,
Пулсан пултӑр йӗс тылӑ,
Йывӑҫҫи те начар мар.
Тимӗр тылӑ ӑшӗнче
Шурӑ шуйттан лараҫ, тет.
Тимӗр тылла тытсанах,
Шӑлӗсемпе шаккаҫ, тет.
Кантӑр тыллас тесенех
Ҫӳпне куҫа кӳртет, тет.
Ҫав ҫӳп куҫра йулсассӑн,
Ҫын тухатмӑш пулаҫ, тет.
Ҫав тухатмӑш хушнипе
Тимӗр тылӑ ҫӗрӗпе
Урам тӑрӑх, хир тӑрӑх
Шалтӑртатса ҫӳрет, тет.
Тылӑ сиксе пынӑ чух,
Ҫулӗ ҫинче ҫын пулсан,
Ӑна хӗссе вӗлерсе,
Йунне ӗҫсе кайаҫ, тет.
Ӗнтӗ пӗлсе ҫитрӗр-и
Мӗншӗн пирӗн инкесен,

*К. В. Иванов.*

## Тимĕр тылă.

Тимĕр тылă тесенех,
Сехри хăпат инкесен.
Мĕншĕн-ши вăл? Пĕлĕр-ха!
Акă мĕншĕн, калам-ха!
Пирĕн чăваш арăмĕ
Тимĕр тылла йуратмаст,
Пулсан пултăр йĕс тылă,
Йывăççи те начар мар.
Тимĕр тылă ăшĕнче
Шурă шуйттан ларат, тет.
Тимĕр тылла тытсанах,
Шăлĕсемпе шаккат, тет.
Кантăр тыллас тесенех
Çӳпне куçа кӳртет, тет.
Çав çӳп куçра йулсассăн,
Çын тухатмăш пулат, тет.
Çав тухатмăш хушнипе
Тимĕр тылă çĕрĕпе
Урам тăрăх, хир тăрăх
Шалтăртатса çӳрет, тет.
Тылă сиксе пынă чух,
Çулĕ çинче çын пулсан,
Ана хĕссе вĕлерсе,
Йунне ĕçсе кайат, тет.
Ĕнтĕ пĕлсе çитрĕр-и
Мĕншĕн пирĕн инкесен,

Тимĕр тылă тесенех,
Сехри хăпса тухнине?
Кам та пулин шанмасран,
Йе вăрçасран хăраса,
Пĕр ĕç çинчен калам-ха –
Хамăр йалта пулнине.

---

Пирĕн йалта пĕр карчăк
Пурăначчĕ ĕлĕкрех.
(Халь ĕнтĕ вăл тупăкрах
Выртать масар хыçĕнче).
Пурăнăçа çав карчăк
Çĕмĕрттеречче анчах.
Пурччĕ унăн качака,
Икĕ сурăх, пĕр кушак,
Чалăш пӳрчĕ тăрринче
Тăманасем усраччĕ,
Тăманасем патĕнчех
Тимĕр тылли лараччĕ:
Пит хăрушă йапала
Пĕр кăтăрса кайсассăн!
Ĕнтĕ хăвăр та пĕлĕр
Карчăк суккăр пулнине,
Мĕншĕн тесен карчăкăн
Тимĕр тылли пур-ĕçке:
Кантăр шăмми çӳппине
Куçа кӳртет шур шуйттан.
Суккăр пулсан инçех мар
Тухатмăша тухма та.
Ку карчăк та—ăçтиçук
Тухатмăшчĕ таврара.
Ăна пĕлмен çын та çук,
Палламан йытă та çук.
Пурччĕ тата карчăкăн

Икĕ тăлăх кинĕсем:
Икĕ кин те, лайăх кин,
Иккĕшĕ те сарă кин.
Аслă кинĕ мĕн йатли
Халĕ пире кирлех мар:
Хăйне кĕвĕлĕ арăмччĕ,
Гўрриперех каласан,
Хитрех те мар мухтама,
Начар та мар хурлама.
Кĕçĕн кинин, каласан,
Йачĕ унăн Чĕкеçчĕ,
Хăй те чĕкеç пекехчĕ,
Ытарма çук аванччĕ,
Алли çăмăл ӳç тума,
Тути çўхе чуптума,
Чĕкеç кинне карчăкĕ
Темшĕн ытла йуратмасӗ,
Хăвăр тупăр мĕншĕнне,
Ăна чĕлхем калаймасӗ.
Куçĕ-пуçĕ пит йăваш,
Çын саванса тăмала,—
Çапах карчăк йуратмасӗ,
Ухмах тесех шухăшлăн.

---

Çакă кинĕ йалан ах
Минкĕретет карчăка:
— Апай, йар-ха хăнана,
Апай, йар-ха хăнана!
— Пуç çавăрмăн, çĕр çатман,
Çигĕ çынна йўтеме.
Аҕантарах ĕçне ту,
Вăхăт çитсен йарăп-ха.
Чĕкеç кинĕ ахалă те
Ĕçне тăват çунт оса,

Карчăк çапах Чĕкеçне
Вăрçаť ĕçне туманшăн.
Суккăр карчăк-карчăкăн
Кӳç курманни ахаљ мар,—
Вăхăт çитсен, хăй вилсен,
Йарĕ-ха вăл хăнана.
Виçĕ кунччен Чĕкеç кин
Ват карчăка йӳтерĕ:
— Апай, йар-ха хăнана,
Аппам патне кайам-ха.
— Ай, çĕр-çăтманă пуçна!
Ырра мар-тăр ку, кинĕм!
Виççĕмĕш кун, каç пулсан,
Карчăк ытлах çиленчĕ.
— Апай, йар-ха хăнана!
Апай, йар-ха хăнана!
— Кайах, кайах, йӳтетмĕш,
Курăн-ĕçке ху кунна.
Кĕçĕрех кай, кĕçĕрех,
Пуçу кунта ан пултăр.
Кин васкаса çавăнтах
Сĕтпе йурчĕ виç йусман:
Хăвăр пĕлетĕр: йусман,
Ырăсене асăнса
Вĕрсе-сурса пĕçерсен,
Пит хăватлă йапала.
Пирĕн йалта йаланах
Инçе çула кайнă чух,
Усал-тĕсел тивесрен
Йусман чиксе кайаççĕ.
Çапла пирĕн инке те
Хай лашине кӳлчĕ те,
Тухса кайрĕ сĕм-çĕрле
Аьăр йалне хăнана.

Тимĕр тылă шалтлататă,
Усал карчăк сӳс тыллатă.
Йĕс тăпсалă хапхана
Уçатă чĕлхе каласа:
— Шалт-шалт, тыллăм, шалт, тыллăм!
Акăр çулĕпе сик, тыллăм,
Çав кин патне çит, тыллăм,
Çав кин пуçне çи, тыллăм!—
Тимĕр тылă, шалт тылă
Сиксе кайрĕ çулпала.
Тылла сиссе сарă кин
Йурă йурлатă, чуптаратă:
— Уйăх çути çап-çутă,
Акăр çулĕ тап-такăр,
Чуп-чуп, лашам, чуп, лашам,
Çитес çĕре çит, лашам,
Хăрат, хăрат тăшмана,
Сĕтпе йурнă йусманăм!—
Пăрахатă те хăваратă
Пĕр йусманне çул çине.
Çитнĕ-çитнĕ çĕртенех,
Йусман тĕлне çитсенех.
Тимĕр тылă хăраса
Сиксе кайрĕ килнеле.
— Шалт-шалт, тыллăм, шалт, тыллăм!
Акăр çулĕпе сик, тыллăм,
Çав кин патне çит, тыллăм!
Çав кин пуçне çи, тыллăм!—
Тимĕр тылă, шалт тылă
Сиксе пыратă çулпала.
Тылла сиссе сарă кин
Татах йурлатă йуррине:
— Уйăх çути çап-çутă,
Акăр çулĕ тап-такăр,

Чуп-чуп, лашам, чуп, лашам,
Çитес çĕре çит, лашам,
Хăрат, хăрат тăшмана,
Сĕтпе йурнă йусманăм!—
Пăрахать те хăварать
Тепĕр йусманне çул çине.
Çитнĕ-çитнĕ çĕртенех,
Йусман тĕлне çитсенех,
Тимĕр тылă хăраса
Сиксе кайрĕ кайала.
— Шалт-шалт, тыллăм, шалт, тыллăм!
Акăр çулĕпе сик, тыллăм,
Çав кин патне çит, тыллăм,
Çав кин пуçне çи, тыллăм!—
Тимĕр тылă, шалт тылă
Сиксе килет çулпала.
Тылла сиссе сарă кин
Йĕрсе йурлать йуррине:
— Акăр çулĕ тап-тăкăр,
Уйăх çути çап-çутă,
Чуп-чуп, лашам, чуп, лашам,
Çитес çĕре çит, лашам,
Хăрат, хăрат тăшмана,
Сĕтпе йуртнă йусманăм!—
Пăрахать те хăварать
Хăйĕн йулашки йусманне.
Çитнĕ-çитнĕ çĕртенех,
Йусман тĕлне çитсенех,
Тимĕр тылă кайала
Сиксе кайрĕ йалала...

---

Çитес çĕре çитрĕ кин,
Шаккать аппăшин хапхине:
— Аппам, кӳрт-ха йăмăкна,

Кӳрт-ха Чĕкĕç йăмăкна,
Усал тăшман хăвалаť.
— Çĕрле çӳрес хăнам çук,
Утах хăвăн çулупа!
— Сывпул еппин, аппамçăм.—
Чĕкеç кайрĕ шаккарĕ
Тепĕр аппăшин хапхине:
— Аппам, кӳрт-ха йăмăкна,
Усал тăшман хăвалаť.
— Çĕрле çӳрес хăнам çук,
Кайах хăвăн çулупа!
— Сывпул еппин, аппаçăм.—
Чĕкеç кайрĕ шаккарĕ
Хăйĕн пиччĕш хапхине:
— Пиччем, кӳрт-ха йăмăкна,
Усал тăшман хăвалаť.
— Çĕрле çӳрес хăнам çук,
Уттар хăвăн çулупа!
— Сывпул еппин, пиччеçĕм.—
Йĕре-йĕре сарă кин
Аслăк çине улăхрĕ,
Йĕре-йĕре çавăнта
Улăм ăшне пытанчĕ.

---

— Шалт-шалт, тыллăм, шалт, тыллăм!
Акăр çулĕпе сик, тыллăм,
Çав кин патне çит, тыллăм,
Çав кин пуçне çи, тыллăм!—
Тимĕр тылă, шалт тылă
Сиксе пыраť çулпала.
Шалт-шалт сикет, шалт тăваť,
Сарă кин чунне витерет...

---

Карчăк хапхи умĕнче
Кĕтет, кĕтет тыллине—
Çук, кăтăрнă пулмала:
Тылли халĕ те таврăнмасŤ.
Таçта-таçта айакра
Шалт-шалт туни илтĕнет.
Антăраса тухатмăш
Тылла чĕнме тытăнаŤ:
— Шалт-шалт, тыллăм, шалт, тыллăм!
Ман патмала сик, тыллăм,
Ман патăма кил, тыллăм,
Мачча çине вырт, тыллăм!—
Таçта-таçта айакра
Аçтаха пек шăхăраŤ,
Ахăр тылă кăтăрнă:
Темĕскерпе çапăçаŤ.
— Шалт-шалт, тыллăм, шалт, тыллăм!
Ман патмала сик, тыллăм,
Ман патăма кил, тыллăм,
Мачча çине вырт тыллăм!—
Таçта-таçта айакра
Шăтăр-шатăр илтĕнет,
Ахăр тылă кăтăрнă:
Темĕн унта çĕмĕрет.
— Шалт-шалт, тыллăм, шалт, тыллăм!
Ман патмала сик, тыллăм,
Ман патăма кил, тыллăм,
Мачча çине вырт, тыллăм!—
Таçта-таçта айакра
Шăтăл-шатăл илтĕнет,
Ахăр тылă кăтăрнă:
Çĕр çĕмĕрсе таврăнаŤ...
Шалт-шалт турĕ, шалт турĕ,
Карчăк пуçĕ йалт турĕ.

Суккăрскер çул çинчен
Ĕлкĕреймерĕ пăрăнса.
Тылă пычĕ, шалтлатрĕ—
Карчăк пуçне татайрĕ.
Тухатмăшăн пырĕнчен
Йухрĕ тухрĕ хура йун...

---

Иртрĕ кайрĕ тĕттĕм çĕр,
Хуллен-хуллен сирĕлчĕ.
Сикрĕ тухрĕ çутă кун,
Çутçанталăк çутăлчĕ.
Акăр йалĕ вăраннă,
Йăвăр ăйхă татăлнă.
Пурте тăваť хăй ĕçне
Ĕçчен чăваш йĕркипе.
Чĕкеç инкен пиччĕшĕ
Авă выљăх апатлаť—
Хăй йăмăкин виллине
Тупаť улăм ăшĕнче,
Авă пыраť пĕр етем,
Арман хуçи урампа.
Шурă сухалĕ икĕ хăлаç,
Туйи çине тайăннă,
Хăй кăвакал пек утаť,
Пысăк лавка умĕнче
Курпунĕ те икĕ пăт,
Хашăлтатса чарăнаť,
Хăй çăнăхлă тумтирне
Çапкаласа мăрлатаť:
—Хурлăх, хурлăх, Михаљ тус,
Ман арманăм çук ĕнтĕ!
Кĕçĕр усал-тĕселсем
Шыв урапи хушшине
Çакланнă та, тытăнчĕç

Урапана ҫилӗпе
Ҫухӑрттарса ҫавӑрса,
Арман чулне шӑхӑртма.
Епӗ чупса тухиччен
Арманӑма усалсем
Лӑштӑр-лаштӑр ишнӗ те
Тара панӑ таҫтала.

Пирӗн йалта чӑвашсем
Тухнӑ тӑнӑ урама,
Ушкӑнӗпе кӗрлеҫҫӗ
Вилнӗ карчӑк тӗлӗнче.
Карчӑк выртӑт, хускалмас̆т,
Тавраш̆ӗнче хура йун.
Пӗвӗ выртӑт пӗр ҫӗрте,
Пуҫӗ выртӑт пӗр йенче.
Тылӑ ларӑт, шалтлатмас̆т,
Мачча ҫинче сасӑ ҫук...
Халӑх шӑв-шавӗ пӗр вӗҫлӗ,
Шӑв-шав сӑмахӗ ҫӗр тӗслӗ.

---

## Тăлăх арăм.

Йумах йупа тăрринче,
Хам урхамах çийĕнче.
Вĕçсе-вĕçсе пытăм та,
Килтĕм тухрăм çакăнта—
Аслă вăрçă хушшине,
Икĕ халăх вăрçнă çĕре.
Унта пĕр кун пурăнтăм,
Çак ĕçсене епĕ куртăм:
Асап курать çичĕ йутра
Çичĕ тăван вăрçăра.
Çичĕ тăван çапăçать,
Çапăçать те тытăçать.
Сăсар çĕлĕк пуçĕнче,
Шурă тумтир пĕвĕнче,
Симĕс тукмак аллинче,
Сенкер сăнă хыçĕнче.
Вĕçет кăвак урхамах
Кайăкран та хытăрах.
Вĕçет, çӳрет тăлхăрса,
Тăшман пуçне таптаса.
Вăрçă шавĕ шав кĕрлет,
Таврашри çĕр кисренет.
Çичĕ тăван çапăçать,
Çапăçать те туй тăвать;
Тăшман пуçĕ çĕмĕрлет,
Хура йунĕ сирпĕнет.
Çавна курса тăнипе,
Хам та хытă пăхнипе,
Сехри хăпса тухнипе

Урхамахӑм сикрӗ те,
Илчӗ кайрӗ туласа,
Пӗр йеннеле ҫаврӑнса.
Ырса ҫитсен тӑтӑмӑр,
Унтан ҫакна куртӑмӑр:
Ҫеҫен хирте ҫил выљаҭ,
Сарӑ ыраш хумханаҭ.
Сарӑ ыраш хумханаҭ,
Чӑваш чунне йӑпатаҭ.
Ирех тӑрса пит ҫуса,
Ирех хырӑм тӑрантса,
Йертсе килет хуњамӑш
Ҫичӗ кинне тыр вырма.
Ҫичӗ тӑван йут ҫӗрте,
Арӑмӗсем ҫак хирте.
Тырӑ выраҫҫӗ йурласа,
Ыраш ӳкет касӑлса,
Пулаҭ-тӑраҭ кӗлтесем,
Кӑтра пуҫлӑ ҫӗмелсем.
Тырӑ выраҫҫӗ йурласа,
Пӗлмеҫҫӗ те канасса.
Темӗншӗн ватӑ карчӑкӑн
Ӑшӗ ҫунаҭ пайан унӑн.
Тырӑ выраҫҫӗ йурласа,
Пӗтрӗ карчӑк ывӑнса,
Ытла ӑшӗ ҫуннипе
Утрӗ урапа патнеле,
Ҫичӗ кашӑк ывӑтрӗ,
Ҫапла сӑмах каларӗ:
— Пӳлӗх, кӑтарт тӗрӗсне,
Кашӑк, кала чӑннине:
Хӑш кин йунлӑ кашӑклӑ –
Пӗтнӗ унӑн упӑшки.
Кашӑк ӳкрӗ ҫаврӑнса,

Ӳкрĕ-тăчĕ йун тулса
Кĕçĕн киннин кашăкки,—
Пĕтнĕ иккен упăшки.

---

Çеçен хирпе кин пыраť,
Вăрçă йеннеле утаť.—
Кашăк йунпа тулайрĕ,
Чăн тĕрĕсне кăтартрĕ.
Йĕре-йĕре кин пыраť,
Аслă пиччĕшне кураť:
— Пиччем, пиччем, шăллунне
Курмарăн-ши виллине?
— Куртăм-ĕçке курасса:
Лараť çӳлĕ ту курăнса,
Çӳлĕ ту айĕнче пӳрт лараť,
Унта шăллăм çывăраť.
Тимĕр-кăвак лашиччĕ,
Лаши тирĕ айĕнче,
Шурă тутăр пит çинче,
Симĕс тукмак аллинче.
Йĕре-йĕре кин кайаť,
Тепĕр пиччĕшне кураť:
— Пиччем, пиччем, шăллунне
Курмарăн-ши виллине?
— Куртăм-ĕçке курасса:
Лараť çӳлĕ ту курăнса,
Çӳлĕ ту çинче пӳрт лараť,
Пӳртре шăллăм çывăраť.
Тимĕр-кăвак лашиччĕ,
Лаши тирĕ айĕнче,
Йĕнерĕ пуçĕ айĕнче,
Сăнни ури вĕçĕнче.
Йĕре-йĕре кин утаť,
Виççĕмĕшне тĕл пулаť;

— Пиччем, пиччем, шăллунне
Курмарăн-ши виллине?
— Куртăм-ĕçке курасса:
Ларать çӳлĕ ту курăнса,
Çӳлĕ ту çинче пӳрт ларать,
Пӳртре шăллăм çывăрать.
Тимĕр-кăвак лашиччĕ,
Лаши тирĕ айĕнче,
Шурă тутăр пит çинче,
Тĕттĕм касĕ куç çинче.

---

Йĕре-йĕре пырать кин,
Çӳлĕ тăва курчĕ тин.
Курчĕ мĕскĕн курасса,
Ларать çӳлĕ ту курăнса,
Тĕтре çӳрет шуралса,
Çӳлĕ ту тавра йавăнса.
Ылттăн хĕвел савăнмасть,
Çутă куна çутатмасть:
Пĕлĕт айне пытанать,
Хăй çуттинчен вăтанать.
Çил тухать те, çил кайать,
Хурлăхлă йурă йурлать.
Çӳлĕ тăвăн тĕлĕнче
Çăхан карать çăварне
Хăйĕн çивчĕ сăмсипе,
Апат пурне сиснипе.
Ту тăрринче пӳрт ларать,
*Чăваш хытă çывăрать.*
Кун килет те, кун иртет,—
Чăваш хытă çывăрать.
Шăппăн выртать, хускалмасть.
Ун арăмĕ хурланать,

Йĕре-йĕре хуйхăрать,
Упăшкине ыталать.
Анчах арăмĕ йĕнине
Вăл сисес çук чĕрипе.
Ĕмĕр-ĕмĕр йĕрсен те
Чĕрĕлес çук куççульпе.
Вара тăваттăмĕш кун
Çакăнчĕ те, пĕтрĕ чун,
Хăй упăшкин çӳçĕпе,
Виçĕ ылттăн пĕрчипе.
Епĕ те вара хурланса,
Икĕ чуна асăнса,
Урхамаха вырттартăм,
Чӳклерĕм те хăвартăм.

